**Шăрăх, кантăрла**

Йалт шултăркана хăмăр йĕкелне
Пăрахрĕ хыр тусанлă çул çине.

Вăл çурăлман граната пек кӳплетрĕ.
Пĕр кайăк ăна хирĕç шĕвиклетрĕ.

Каллех шăп-шăпăрт пулчĕ таврара –
Вăрман-мĕн йăшăлт тунă ыйхăра.

Каллех вĕр типĕ, сарă-хăмăр шăрăх
Чупса саланчĕ ешĕл симĕс тăрăх.

Нейтралитет тытса тăран тӳпе,
Пăхсан, чăнах, чее политик пек.

Лару-тăру улшăнасса кĕтсе-ши,
Е циникла: «Мана мĕнех», – тесе-ши –

Вăл туйăмсăр сăнать çĕре çӳлтен
(Пач ăмсанмасăрах та мар пуль, тен)...

Çапах хырсен тăррисене пăхсассăн
Кăшт илтĕнет темле хаваслă сасă.

Унта, çӳлте, сип-симĕс парăссем
Кĕтеççĕ усă çил кĕç вĕрессе.

Килинччĕ хуть çил-тăвăл, ах,
килинччĕ,
Çап-сутă çумăр лӳшкетме пуçлинччĕ!

Халь тĕлĕрен вăрманăн та вара
Лăпланĕччĕ ăш-чикĕ тăвăлра.

Хырсем те, ешĕл парăслă армада,
Хăюллăн, пытанмасăр, шăтăр-шăтăр

Пĕр харăс кĕрĕччĕç абордажа –
Пуçланĕччĕ – эй! – ырă тамаша.

Сахалăшĕ, тен, юлĕччĕç чĕр-сывă,
Анчах мĕнле тĕнче, мĕнле чĕр сывлăш!

Кам килӗштӗр пуҫа сыхлас тесе
Лармашкăн пăчăхса та тӗлӗрсе?

Ҫак шăплăхра хăй телейне кам тупӗ?..
Ҫук, шăплăх та, телей те мар ку – тупăк...

Ав шултăркана хăмăр йӗкелне
Каллех пăрахрӗ хыр тусан ҫине.

Каллех шăвать ем-ешӗл симӗс тăрăх
Вӗр типӗ, сарă-хăмăр, выҫă шăрăх...

*Айташ, Ю. Шăрăх, кăнтăрла / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 404.*